**Районти Тыр-пул уявěнчен**

# Ял ěçченě уявра савăнчě

Хěвеллě те ăшă кунсене çӳл тӳпери хур кайăксем илсе кайрěç тейěн. Пукрав çитнě май, ял çынни уй-хир ěçěсенчен пушанчě. Халě вара çу каçипе вăй хунине пěтěмлетме вăхăт.

Районта кěрхи ěçсем вěçленсен Тыр-пул уявне



М.В. Игнатьев Муркашсен пултарулăхěпе паллашать.

ирттересси çирěп йăлара. Халăх вара ăна хаваспах йышăнать тата хутшăнать. Ял хуçалăх ěçченěсен иртнě черетлě уявě те çавнах çирěплетет. Хěрӳ ěçре ирттернě çу кунěсем хыççăн кăшт канса илни те çылăх мар.

Кăçал çак уяв октябрěн 14-мěшěнче, шăмат кун, авалтан паллă тăвакан Пукрав кунěнче иртрě. Ахальтен каламан халăхра, шăмат кун çара çерçи те кěреке пухнă тет. Кунти кěреке те хăйěн ытамне ытамларě, кěрхи уяв кучченеçěсемпе кашнинех сăйланма чěнчě. Кěр мăнтăрě пěрлешӳллě хуçалăхсем япăх мар ěçленине, çулталăк тăршшěпех ответлăха туйса тăрăшнине уявра кăтартрě.

Суту-илӳ çурчě умěнчи



«Ударник» хуçалăх ертӳçи 3-мěш вырăншăн Диплом илнě самант.

лаптăка халăх ирех пухăнчě. Кунта пěрлешӳллě хуçалăхсен ěçченěсем, хăйсен килти хуçалăхěсенче тěрлě продукци çитěнтерсе туса илекенсем, уйрăм фермерсем, хамăр районти райпосен предприятийěсем чылайăн хутшăнни ăнсăртран мар. Вěсем пурте ял хуçалăх ěçченěсен уявне тулли кăмăлпа палăртма пухăнчěç кунта. Ятарласа хатěрленě сцена кěрхи уява хатěрленсе илемлетни курăнчě. Çӳл тӳперен юрпа хутăш çумăр çусан та уяв илемлě пулчě, Пукрав çитнине систерчě.

– Кăçалхи çанталăк çěр ěçченне питě тěплěн тěрěслерě. Тăтăшах йěпесапа тăчě. Çав хушăрах хěвеллě кунсем те пулнипе ěçлеме пултаракансем туллин усă курма пултарчěç. Тыр-пула, пахча çимěçе пухса кěртме ěлкěрчěç. Тупăшěсене те ырламалла. Вěсен кăтартăвěсене пěтěмлетнě хыççăн 1-мěш вырăнта “Свобода”, 2-мěш вырăнта Ильич ячěпе хисепленекен хуçалăх, 3-мěш вырăнта “Ударник” хуçалăх пулни палăрчě. Малтисен опычě çакна çирěплетет: районта ӳсен-тăран продукцине ытларах туса илме майсем çителěклě.

Çав хушăрах кайра пыракансене те питлес килет. Эсир хăвăр ěçěре тивěçлě шайра пурнăçламанран район кăтартăвěсене каялла туртса пыратăр. Çак çитменлěхсемпе çирěппěн ěçлеме ыйтас килет.

Апла пулин те Муркашсем мал ěмěтпе пурăнаççě, ěçлеççě, тăрăшаççě. Юлашкинчен вара сире пурне те уява савăнăçлă ирттерме, малаллахи пурнăçра ырлăхсывлăх, телей сунатăп, – терě район администрацийěн пуçлăхě Ю.А. Иванов.

Муркаш районěн ял хуçалăх ěçченěсене çак уявпа саламлама йышлăн килсе çитрěç.

Хастар ěçшěн Тыр-пул уявěнче районти маттур та пултаруллă çынсем тěрлě йышши грамотăсене тивěçрěç. “Моргаушавтотехсервисра” ěçлекен Н.П. Сазонована Раççей Федерацийěн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе чысларěç. Ильич ячěпе хисепленекен хуçалăхри З.М. Семенова, Суворов ячěпе хисепленекен хуçалăхри Ю.Г. Орлов, “Ударникри” И.М. Шивирев, “Герой” хуçалăхри Е.М. Григорьева Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивěç пулчěç. Ытти тăрăшуллă ял хуçалăх ěçченěсене район администрацийěн Хисеп грамотипе хисеп турěç.

Çавăн пекех ялсене симěслентерес, тирпей-илем кěртес енěпе смотр-конкурсăн пěтěмлетěвě тăрăх “Социаллă сферăри учрежденисене, вěсен çывăхěнчи лаптăксене симěслетес” номинацире 1-мěш вырăна Сыпайри пěтěмěшле пěлӳ паракан вăтам шкул тивěçрě, 3 пин тенкě укçан парса хавхалантарчěç. 2-мěш вырăна Калайкасси шкулě тивěçрě, 2 пин тенкě пачěç. Мăн Сěнтěрти шкул 3-мěш вырăн тата 1 пин тенкě çěнсе илчě.



А.А. Налимова район администрацийěн Хисеп грамотипе.

“Чи лайăх кил-çурт” номинацире 1-мěш вырăна никама та паман, 2-мěш вырăна Ситуккассинчи Р.Ф. Ордикова тухса 2 пин тенкěне тивěçрě. Кашмашри С.С. Шапошникована 3-мěш вырăна тухнăшăн 1 пин тенкěпе хавхалантарчěç.





Çăкăр-тăвар – сěтел илемě.

“Кану кěтесěсене чечексемпе илемлетесси” номинацире Кашмашри В.И. Ярикова малти вырăншăн 1,5 пин тенкě парса чысларěç. 2-мěш вырăна Шупуç кордонě тухса 1 пин тенкě илме пултарчě. 3-мěш вырăнта Йӳçкассинчи ваттисен çурчě пулни палăрчě. Вěсене уншăн 500 тенкě укçан хавхалантарчěç.

Муркаш районě ытти районсемпе тата республикăри влаç органěсемпе тачă çыхăну тытать. Хăнасем хушшинче Чăваш Республикин ял хуçалăх министрě М.В. Игнатьев, Муркаш районěн ентешлěх ěçěсене туса пыракан А.И. Федотов ячěпе М.И. Федотов, Раççейри хăмлаçăсен ассоциацийěн президенчě Г.С. Горланов, Чăваш Республикин



Р.Ф. Ордикова – «Чи лайăх кил-çурт» номинацири çěнтерӳçě.

Патшалăх Канашěн депутачě, “Муркаш районěн тěп больници” муниципаллă сывату учрежденийěн тěп врачě В.Г. Данилов, “Россельхозбанк” УАО директорěн çумě М.Д. Федотов, çавăн пекех ытти хисеплě çынсем уяв ячěпе саламларěç, Муркашсем ěçлеме пултарнине çирěплетрěç, малалла тата та килěштерсе ěçлессе шантарчěç.

Çак лапамрах пěрлешӳллě хуçалăхсенчен, ытти предприятисемпе организацисенчен килнě автомашинăсем çинчен мěн-мěн сутмаççě пулě. Кашни утăмрах – кěр мăнтăрěн паллисем. Кашниех харпăр хăй туса илнě е çитěнтернě продукцие кăтартма-сěнме тăрăшать. Паян вара кунта вěсем нумайăн килсе çитнě. Вěсем туянакансене пахча çимěç, ашкакай, тыр-пул, улма-çырла хунавěсем, пыл сěнчěç. Сутуçисем те тавар туянакансемпе вашават та кăмăллă. Таварне те сěнме пěлеççě, çынсен кăмăлěсене те хавхалантараççě.

Суту-илӳ урамра кăна пымарě. Çавăн пекех Спорт çуртěнче ял хуçалăх предприятийěсенче тата шкул картишěсенче туса илнě тата çитěнтернě продукцисен выставки тěрлě номинаципе иртрě. Хăйсен ěçěсене кунта чылайăн тăратнă. Хăш-пěр хуçалăхсем сӳрěккěн хутшăнни е пачах хутшăнманни курăнчě. Паллах, хăйсен ěçне-хěлне район умěнче тивěçлипе кăтартайманни килěшӳллех мар пулě.

Пултаруллисен пěтěмлетěвěсене кăтартма та кăмăллă. “Чи лайăх хитрелетӳ” номинацире пěрремěш вырăна “Оринино” ял хуçалăхě тивěçрě. Çавăн пекех “Волга” хуçалăх куравра хăйне аван кăтартрě. Ильич ячěпе хисепленекен хуçалăхăн тата шкул ачисемпе пěрле хатěрленě курав та лайăххисен шутěнче пулчě.



Пěрремěш вырăна тухнă Муркаш шкулěн коллективě.

“Тематика тěлěшěнчен чи лайăх енчен палăртни” номинацире “Ударник” хуçалăх хатěрленě кěтес куравра лайăххисен шутěнче пулчě, çавăн пекех Суворов ячěпе хисепленекен хуçалăх, “Моргаушская” чăх-чěп фабрики тата Муркашри сěт завочě курава аван хатěрленнě.



В.Н. Иванов Муркаш район администрацийěн Хисеп грамотине тивěçрě.

Çавăн пекех Спорт çуртěнче курава 26 шкул коллективě, “Путене”, “Мечта”, “Малыш” ача сачěсем тата Хорнуй шкулěнчи кěçěн класс коллективěсем хутшăнчěç.

“Кěрхи вăхăт” номинацире 1-мěш вырăна Орининти пěтěмěшле пěлӳ паракан вăтам шкул тивěçрě, 2-мěш вырăна Йӳçкассинчи шкул тухрě, 3-мěш вырăна Атапайри пěтěмěшле пěлӳ паракан тěп шкул çěнсе илчě.

“Çут çанталăк тата ăсталăх” номинацире Çатракасси шкулě малти вырăнта пулчě. Иккěмěш вырăна Кашмаш шкулě тухрě. Сыпайри шкул ачисем те курава аван хатěрленнě.

“Ах, епле тěлěнтермěш” номинацире Мăн Сěнтěрти шкул пěрремěш пулчě. Иккěмěшě – Чуманкассинчи шкул, виççěмěшсем – Шомикри шкул ачисем.

“Тыр-пул – 2006” номинацире 1-мěш вырăна Нискасси шкулě тухрě. 2-мěш вырăна Ильинкăри шкул ачисем çěнсе илчěç. 3-мěшне Ярапайкассинчи шкул коллективě тивěçрě.

“Чи лайăх хитрелетӳ” номинацире пěрремěшсем Муркаш шкулěн ачисем пулчěç. Иккěмěш вырăна Муркаш лицейě тухрě. Виççěмěшсем – Калайкассинчи шкул ачисем.

Çут çанталăк материалěсенчен тěрлě япаласем хатěрлес тěлěшпе пурте тăрăшни курăнчě.

Çавăн пекех методика кабинетěнче ирттернě выставкăна та шкул ачисем питě тěплěн хатěрленнě. Кунта кěрсен хăвна юмах тěнчине лекнěн туятăн. Вěсем тěрлě пахча çимěçрен апат-çимěç, тěрлě тěлěнтермěшсене хатěрлеме ăста. Кунта пěçерсе килнě тортсем, кукăльсем



И.М. Шивирев Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине илчě.

пысăк специалистсем хатěрленě евěр курăнаççě. Тутлă апат-çимěç пěçерессипе Муркашри пěтěмěшле пěлӳ паракан вăтам шкул малти вырăна çěнсе илчě.

Тыр-пул уявěн программи анлă та савăк пулчě. Çак кун районти историпе краеведени музейěнче сурпансен пуян коллекцийěн презен-



Сурпан коллекцин презентацине уçнă самант.

тацийě пулчě. Ăна Ярапайкассинчи “Екрем” халăх фольклор ансамблě тěплěн кăтартрě.

Музей ертӳçи Е.В. Романова кашни сурпанпа паллаштарчě, вěсен вăрттăнлăхěсем çинчен каласа пачě.

Район администрацийěн социаллă аталану пайěн ертӳçи А.Е. Андреева авалăха упрасси çинче тěплěн чарăнса тăчě.

– Музей – ял, наци йăлисене, традицийěсене, халăх хăй евěрлěхне, сăпайлăхне сыхласа упракан вырăн. Çак çутă тасалăх, аваллăхпа пуласлăха çыхăнтарса тăракан вăчăрана упраса хăварас тесен пирěн, культура ěçченěсен, тăрăшмалла. Культура учрежденийěсене йěркеллě ěçлеттермелле, унта халăха ытларах явăçтармалла, – пěлтерчě Алевтина Евстафьевна. Çапла пултăрччě.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**